**Сысна уявӗ**

Кӗрхи йӗпе-сапасем тапрансанах манӑн пыр ярӑнма пуҫлать. Эх, шелмӑ, юмӑҫран та хаярскер вӑл, ытла та катарине систерет.Хӑшӗ-пӗрисем, пырӗ ярӑнсан, тепрер икӗ-виҫӗ сехетренех сыпмалли тупӑнать имӗш. Кунашаллисене ӑмсанмастӑп. Сӑмса вӗҫӗнчине ҫерҫи те курать, катарине вара... кунта ҫӑхан сисӗмӗ кирлӗ.

Малтанхи хут пыр ярӑнсан, эпӗ асаттерен тӑрса юлнӑ хулӑн та шӗвӗр вӗҫлӗ ҫӗҫҫе хӑйӑрма тытӑнатӑп. Тепӗр эрнерен уяв ситет: ҫӗр шӑннӑ, юр та ӳкнӗ. Вӑл кун эпӗ паяльнӑй лампӑна бензин яратӑп (ку шӗвеке хӑшпӗр шофӗртан тепӗр шӗвек сыптарса малтанах тупса хума пулать). Хам вара тӑтӑшах урамри чӳречене пырса пӑхатӑп: кам ченме килет-ши?

Манӑн сысна уявне Карачӑм карчӑкки пуҫаркан. Вал яланах мана пустарать, ма тесен ун ни тӑванӗ, ни пӗтенӗ, ни кӳрши, ни арши — йӑлтах тӳр пилӗксем. То учитель, то врач, то бухгалтер... Папка та портфель кана йӑтса утаҫҫӗ, хресчен ӗҫӗпе вара ни мӑшик, ни пӑшик. Кам патне каймалла, кама тархасламалла, мана пулмасан?

Мӗншӗн, тетӗр-и? Калам, эппин. Ӑрачӗ пирӗн чаплӑ. Манӑн атте пӗррехинче, тавлашса, перле тытнӑ хӗрӗх йӗкӗне кӑкӑрӗ умӗнче шат ҫеҫ хуҫнӑ. Унпа тавлашаканни ҫакна ҫур литр эрех илсе панӑ, вӑл вара ҫак тур шывне кӗленче тутинченех ҫӑварне силленӗ. Ку атте пирки-ха. Мӗн вӑл ӗлӗкхи ҫын? Вӑл ахаль сӑрапа та ӳсӗрӗлнӗ. Мана урараан ӳкрме «Московская особая водка» текенни виҫӗ кӗленче кирлӗ. Тата мӗнле лару-тӑрура-ха вӑл. Енчен ӗҫиччен ҫур кӗрепенкке услам ҫу персе лартрӑм пулсан, унпа та ӳкместӗп. Леш ӑпӑр-тапӑр «аншарлине» виҫме хӑнӑхман. Ҫӗрулминчен тунине четверчӗпех яратӑп. Халь сахӑртан тума вӗренчӗҫ тата. Ку «особая» тенинчен те хаяр. Шеремет патшалӑхӗ, епле кӑна сахӑр кӑларса ҫитерет, хӑшпӗр лаҫсем эрех завочӗсемпе пӗрех ӗҫлеҫҫӗ.

Эпӗ тата ӑста. Ялта пур-ха ӑстасем, ҫук мар, анчах вӗсем манран ҫичӗ ҫухрӑм катара. Пӗри — Курак Куҫми. Унӑн алли ҫӑмӑл теҫҫӗ. Ҫӑмӑл-и, ҫӑмӑл мар-и — виҫсе курман. Пухать ҫак мужик пӗтӗм кӳршӗ-арша, месерле

пăрахнă çуна çине темиçе пăт таякан сыснана çавăрса хуртарать. Чĕтрекен аллисемпе пуçлать йăкăрлатма сысна мăйĕнчен, сурăх пуснă еек. Сысни Чăваш республики илтмелле çухăрать. Çынсем тӳрех пĕлеççĕ: Курак Куçми нуша кăтартатъ. Куракăн тата унăн хăй юрри: кун пек пуссан юнĕ йăлтах юхса тухать имĕш, ашĕ те, шӳрпи те тутлă-мĕн. Анчах Куçмана пулăшма виçĕ-тăвата çын кирлĕ. Тирпе вĕтме те вăл çăка вучĕ хурсах вĕтет, пусмалли техника ун аллă çул каяллиех. Çапах та ăна пустаракан ухмахсем тупăнаççĕ.

Кăçал манăн пырăн сисĕмлĕхĕ тата ӳсрĕ. Малтанах пыр ярăннăранпа вунă кун та иртрĕ. Йăпăх-япăх кĕрхи çанталăк мана çеç мар, колхоз председательне те йăлăхтарса çитерчĕ пуль. Ни тухса çӳреме, ни урапа кӳлме. Унашкал çанталăка тӳсме пулать-и-ха. Чӳрече умне бригадир пымасть, арăм та ĕçе каймастăн тесе ятлаçмасть. Ирхине вырăн çинче пĕрре куçна уçса тутлăн анаслатăн, унтан, канакан министр пек, тепĕр аяк çине васкамасăр çăврăнса куçа хупатăн. Харлаттаран тепре. Тулĕк пыр ярăнни çеç шăмшака çӳçентерет те, канлĕн-канлĕн шухăшлаттарать: хăçан шăнтать-ши эсремет çанталăкĕ?

Вунпĕрмĕш кунĕнче, хам йăраланкаласа тăнă çĕре, Карачăм карчăкĕ кăштăртатса çитрĕ.

— Е-е, Шăнкăрч килтех-ха. Ман килес, ыр кун пултăр, — текелесе кинеми çĕлĕкне хывса хул хушшине хĕстерчĕ. Карачăм карчăкне курсанах манăн пыр яла илтĕнмелле ярăнчĕ: — янкăрр! янкăрр! янкăрр!

— Килте пулмасан ăçта пултăр вăл кахал, — салтса ярать чараксăр чĕлхине арăм.

— Кин, ун пек ан кӳрентер-ха. Шăнкăрчăн алли ылтăн ун... — ман хута кĕрет кинеми.

— Мĕн ылтăнĕ пултăр? Пуртă аври лартайман арçын арçын-и вăл? Ял кулли! Пăрлешнĕ те, ача-пăчаллă пулнă та, пурнас пулать.

— Кĕçĕ ернĕ чĕлхӳне сысна çĕççипех татса ывăтатăп ак, — çилленсех кайрăм эп. Хĕрарăм та çав: унăн яланах çын умĕнче упăшкине намăслантармалла, ăс памалла.

— Шăнкăрч, мĕнле, паян пусса параймăн-ши? — çине тăрать кинеми.

— Ненай! Çав хурт çимен чĕлхе килтине пустарасшăн та, — тинкеретĕп эп арăм енне куç хӳрипе.

— Пусса парах. Шӳрпе çиме лавкка эрехĕ те илтĕм, — хистет çаплах Карачăм карчăкки.

Шӳрпе тесен тата ман ăша шуйттан кĕрсе ларать пуль. Ирех юрлас килет. Ача пек йăлттă-ялттă сиккелеме те хатĕр.

Утатпăр тухса. Çитсенех кинеми сыснине валашкана апат ярса паратăп, пуртă тăршшипе икĕ хăлха хушшинчен самаях вăйлă танклаттаратăп. Палт! кайса ӳкет сысна. Мăшăлт та тумастъ выльăх, ним сас-чĕвĕ те кăлармасть. Эп Курак Куçми мар, нушалантармастăп.

Карачăм карчăкки пулăшнипе сыснана сарай каштинчен çакса хуратăп. Халь ирĕлтермелли лампа ĕçе кĕрет, вăл сăхма хатĕрленнĕ çĕлен пек чашлама пуçлать. Малтан çăмĕсене çунтарса тухатăп, унтан вĕтме пуçлатăп. Тапса тухатъ кукар шăрши — хăть халех ташла! Малтан тирĕ хăп-хăмăр пулса лариччен ĕнтетĕп, вара шыв сапса хырса тăкатăп. Тирĕ услам çу пек сап-сарă пулса ларать. Хырма мĕнле çĕçĕпе хырнинчен те килет, çивĕччипе таса пулать, мăкараххипе — шăрчĕ юлма пултарать. Кам патĕнче ĕçлетен, пĕр сăмахпа: интеллигент патĕнче тасарах тăватăн, Карачăм карчăкне пырать ăна. Пĕлетпĕр ăçта епле ĕçлемеллине, паян çеç пурăнман тĕнчере.

Вĕтсе пĕтерсенех хăлхисене, урисене касса паратăп, ăшне кăларатăп: хуран çак та пĕçер шӳрпе. Ыхрапа лавр çулçи яма ан ман. Юнне ăна тултармăш тунă ĕнтĕ, вăл — чи малтанхи закуска, мана ĕç пĕтерессе кĕтсе ларать. Сысна ăшне кăларсан, сивĕ шывпа çăватăп, малти хул тăрринчен çурăмне касса хĕреслетĕп. Каснă вырăн тăрăх сысна сали мĕн хулăнăшне пĕлме пулать. Кинеми сыснин икĕ пӳрне пек кăна, ялти пекарньăра ĕçлекен Трихванăн вара ал лаппинчен те сарлака. Ун сыснинче хура аш тупаймăн. Паллă: бесплат çăкăр, кӳптер те кӳптер.

Сыснана çĕклесе çенĕке кĕретĕп, стропил каштинчен çакса паратăп. Халь алла çума юрать, сĕтел çинче «особая» мана кĕтсе йăл! кулать. Карчăк

вăр-вар-ха: вĕреюен хурантан юн тултармăшĕ кăларса парать. Эрех патĕнче çеç вăл мĕшĕлти, юрать-ха пăккине хам уçса паратăп. Кинеми сăра стаканĕ çине ярса ваттисене асăнать, стаканри эрехне сĕтел çине тумлатать. Ваттисене çапла асăнмалла-и? Мĕншĕн эрехе сая ямалла, пĕлместĕп: вилĕ çын сĕтел патне пырса çуллас çук. Хайхи-майхи ватсупнă тинех тутанса пăхать, «çакна мĕнле ĕçеççĕ» тесе пуçне суллать. Ĕçесси вăл — сысна пусасси мар. Хама тулли тултарса панă стакана вашт! çеç çавăрса хуратăп та çиме пикенетĕп. Акă ăçта вăл тĕнчери ырлăх! Эрех юн тăрăх вăшăл-вăшăл, пăшăл-пăшăл туса чупать, тултармăш пăслансах çиме ыйтать.

— Шăнкăрч, эс хăвах ярса ĕç-ха, эп шӳрпипе айланам, — текелет карчăк.

Мана çак кăна кирлĕ те. Юлашки эрехне, тултарса хаплаттаратăп, çийĕнчен тепĕр виçĕ стакан кăрчамапа тăрлатăп. Пăхаттир халь эп! Ăшра ш тăкăнса вĕрет. Тухса утап килелле. Каçчен килти сыснана пусса хуратăп, вара, арăма çавăтса, — Карачăм карчăкки патне шӳрпене. Тăванĕ-пĕтенĕсене пухать вăл, эрехĕ те пур, кăрчами те. Пуçланать сысна уявĕ. Акă ăçта вăл ырлăх!

Ирхине ирех Карачăм карчăкĕ патне çитсе мухмăр уçатăп, унтан теприн патне — сысна пусма.

Анчах кăçал эп тухаçлах ĕçлеймерĕм. Ял Совет председателĕ Сухăр Пурхили пĕтерчĕ мана. Хут çинче ăна Порфирий Петрович Серов теççĕ-ха та, эп Сухăр Пурхилиех тетĕп.

Шăнтсан тăваттăмĕш куннеччĕ пулас, кăнтăрлачченех кĕтсе лартăм килте. Темĕн, пуема чĕнекен пулмарĕ. Вара тухса утрăм Трихван пекарь патне. Кашни çулах ун сыснине эп пусса панă.

Çенĕке кĕрсенех куратап: пуснă сысна çакăнса тăрать. Чĕрем карт! сиксе сылтăма куçса ларчĕ.

— Э, халь ялта сысна пусакансем пуй, — терĕ Трихвăн арăмĕ, селĕпскер, эп тĕлĕннине курсан. — Ял Советне кайса пĕй тенкĕ тӳлетĕн те, Пойфийий Петйович туххăмйа çынсене яйса пайать.

— Камсене?

— Айа, леш аш-пӑш комбинатӗнче ӗҫленӗ Сааипа Енӗш Йӑванӗ тата тепӗй ҫичӗ-сакай ҫын пусаҫҫӗ. Шӳйпе те ҫитейесси ҫук вӗсене, кунне иккӗн вуншай сысна майлаҫҫӗ теҫҫӗ. Ялта халь пустайман выльӑх та юлмайӗ пуль.

Ма хурт ҫимест санӑн селӗп чӗлхӳне?!

Тухса утрӑм колхоз правленине. Октябрь уйӑхӗнче ӗҫленӗ укҫана илсен, шӑпах виҫӗ кӗленче «особая» тенине туянма ҫитрӗ. Сысна шӳрписӗр салху та кичем. Тарӑхнипе киле ҫитсе автан урине персе хуҫрӑм, арӑма шӳрпе пӗҫерттерсе ҫирӗм. Тинех лӑпланчӗ чун.

* * *

Ку историе район больницинче выртнӑ чух пӗр хӗрӗхсене ҫывхаракан Шӑнкарч ятлӑ ҫын каласа панӑччӗ. Ултӑ пӑта яхӑн таякан патвар арҫын хӑйне врачсем выльӑхӑн темле йывӑр ятлӑ чирӗпе чирлетӗн тесен те ӗненместчӗ, сысна юнне чӗрӗллех ӗҫни сывлӑхшӑн пысӑк усӑллӑ пулнӑ пирки сӑмах ваклатчӗ. Хӑйне вӑл пӗр-пӗр пысӑк ӗҫ тӑвакан паттӑр пекех хӑюллӑ тыткалатчӗ, намӑсӗ-симӗсӗ ҫукрахчӗ ун. Пур-ҫке кашни ялтах ҫавӑн пек ҫын-и, е ҫынсем-и: вӗсем ырӑ ӗҫ тунипе мар, ӗҫкӗпе чапа тухнӑ, вӗсем колхозра миҫе кун ӗҫленипе мар, миҫе кун ӗҫнипе мухтанаҫҫӗ. Сывӑ чухне кунашкал лӑпӑр-лапӑр историсене итлеместӗн те. Анчах мӗнпе ирттерӗн-ха палатӑри кичем вӑхӑта?

Кӑҫалхи хӗл пуҫламӑшӗнче манӑн татах больницӑра выртма тиврӗ. Сывалса тухас кун Шӑнкӑрча каллех тиесе килчӗҫ. Шӳрпе ҫисе ытлашши ӗҫнӗ те, килне те ҫитеймен, шеремет. Ҫӗр каҫиччен урамрах шӑнса хытнӑ.

Мӗн тӑвӑн: сысна уявӗ... Шӳрпене ӗҫкӗсӗр ҫимеҫҫӗ.

*Емельянов, А. Сысна уявӗ : [калав] // Емельянов, А. Чапшӑн пурӑнмастпӑр / А. Емельянов. – Шупашкар, 1971. – С. 203-207.*